### Эсир ачана садике вырнаçтарнă-и?

# Çĕнĕ ушкăнсем уçăлĕç

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Мăн Сĕнтĕрти йывăр лару-тăрăва татса парас тесе çитес çул ача сачĕн çурчĕ çумнех пристрой туса хута яма палăртнă. Ку хушма 2 ушкăн уçма май парĕ. Мĕншĕн кăçал мар? Мĕншĕн тесен кăçалхи бюджетра ку ыйтăва çĕклемен, çавăнпах ăна пурнăçа кĕртме укçа-тенкĕ пăхса хуман. Ача сачĕсене тытса тăрассине вырăнти бюджетра палăртаççĕ. 2009 çул бюджетне тахçанах йышăннă ĕнтĕ. Çавăнпа та хушма укçа-тенкĕ пулсан çеç çĕнĕ ушкăнсем пирки калаçма пулать.

**– Районта ытти ял тăрăхĕсенче ача садĕнче вырăнсем çитеççĕ-и?**

– Ял тăрăхĕсенче ачасем çуралассипĕр пекрех шайра пынипе ача сачĕсенче хальлĕхе вырăнсем çитеççĕ. Çапах та Ярапайкассинчи, Кивĕ Матьăкри тата Атапайĕнчи ача сачĕсенче вырăн сахалланма пуçларĕ – ачасем ытларах çуралнипе çыхăннă ку пулăм. Москакассинчи «Колокольчик» ача садĕнче те çĕнĕ вĕренӳ çулĕнче тепĕр хушма ушкăн уçма хатĕрленетпĕр.

Район администрацийĕн вĕренӳ пайĕ шкулчченхи вĕренӳпе воспитани процессне ачасене ытларах явăçтарасси çине пысăк тимлĕх уйăрать. Анчах та Чăваш Республикин Экономика аталанăвĕн министерстви ирттернĕ ыйтăмра республикăри ашшĕ-амăшĕсен 49 процентĕ кăна шкулчченхи вĕренӳ пахалăхĕпе кăмăллă пулнине пĕлтернĕ. Апла пулсан пирĕн паянхи тĕп тĕллев – çак пахалăха ӳстересси, ашшĕ-амăшĕсемпе тачă çыхăну тытса ĕçлесси, вĕсене садиксен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен тулли информаципе тивĕçтересси.

**– Зоя Юрьевна, ку çăмăл мар лару-тăрура районта çемье ача сачĕсем е тата килти ача сачĕсем йĕркелессипе ыйту сӳтсе явни пулнă пулĕ. Ача сачĕн çак формисем пирки тĕплĕнрех ăнлантарса парсан аванччĕ.**

– Çапла. Ку ыйту тавра пĕрре мар калаçрăмăр. Çемье е килти ача сачĕсене йĕркелесси хальлĕхе вырăнтан йывăррăн тапранать темелле. Ку йăлтах çынсем информацие тĕрĕс мар е çителĕксĕр ăнланнипе çыхăннă пулĕ тетĕп.

Çемье ача садне нумай ачаллă çемьесенче шкул çулне çитмен виççĕ е ытларах ача пулсан çак çемьерех уçма май пур. Енчен те нумай ачаллă çемьере иккĕшĕ çеç шкула каймаççĕ пулсан, кунта ытти нумай ачаллă çемьесенчи ачасене явăçтармалла. Килти ача садне вара пĕчĕк ачасăр çын та, калăпăр, халĕ ĕçлемен пуçламăш классен вĕрентекенĕ, уçма пултарать. Кăна валли вара ытти ашшĕ-амăшĕсем (виççĕрен кая мар) ачана çак садике илме ыйтса çырнă заявленисем пулмалла.

Паллах, çак садиксене йĕркелесси пурăнмалли çуртăн санитарипе гигиена енĕсене те, унăн калăпăшне те пырса тивет. Çакнашкал садиксенче ĕçлекенсене вара ĕç укçи параççĕ, отпуск та пур вĕсен, больничнăйсем те тӳлеççĕ. Ачасене апатлантарма укçа куçарса параççĕ. Кунсăр пуçне çурта юсанă тăкакăн пĕр пайне саплаштараççĕ, электроэнергипе тата газпа усă курнин пайĕсене те. Тепĕр майлă каласан, ĕç пулать, унпа пĕрлех ĕç укçи те, çăмăллăхсем те, ача та садике çӳреме пуçлать. Çапла вара паянхи кризис вăхăтĕнче те ответлăхлă тата малашлăха çирĕпрех пăхакансем ĕççĕр юлмаççĕ пулĕ тетĕп. Ку ыйтупа интересленекенсем тĕплĕнрех 62-0-75 номерпе шăнкăравласа пĕлме пултараççĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА калаçнă.**

### Сывлăх

# Шăрăх кунсенче

***Хĕвел пĕçертекен кунсенче организма çăмăлтарах пултăр тесен мĕн çимелле? Шыв е чей ĕçни усăллăрах? Специалистсем акă мĕн сĕнеççĕ.***

Нумайăшĕ мороженăй виçесĕр çиет. Пăр пек сивĕскер вара шăрăх çанталăкра нимĕнле усă та памасть. Ун вырăнне ăшă симĕс чей ĕçни ытларах усă кӳрĕ. Пахча çимĕçпе улма-çырла та çисе уçăлма пулать. Анчах та вĕсен пахалăхне тимлĕ пăхса илмелле.

Шыв ытларах ĕçмелле, уйрăмах минераллă шывсем. Шăрăхра организм температури нормăра пултăр тесе кĕлетке тарлать. Анчах та шĕвек çитменнипе вăл ăшăнса каять. Ал айĕнче ĕçмелли шыв çук пулсан темиçе тăварлă мăйăр çини те аван. Мĕншĕн тесен тăвар организмри шыва тытса тăма пулăшать.

Соксен усси пирки те пĕлетпĕр. Вĕсем организма тĕрлĕ минераллă веществосемпе тата витаминсемпе пуянлатаççĕ, организма кирлĕ пек ĕçлесе пыма пулăшаççĕ.

Ирхи 6 сехетрен пуçласа кăнтăрлахи 12 сехетчен тата каçхи 4-ран пуçласа 7 сехетчен хĕвел вăйĕ сахалрах. Анчах кăнтăрла, хĕвел хытă пĕçертнĕ чух, нумай вăхăт хушши урамра е пляжра пулмалла мар. Пуçа хĕвелтен сыхламалла. Зонт айне пытанни те ытлашши пулмасть. Хĕвелпе пиçĕхнĕ чух вара сывăрса каймалла мар. Хĕвел пайăркисенчен сыхланма пулăшакан кремсемпе те усă курмалла.

Çывăрас умĕн пĕрре ăшă, тепре сивĕ шывпа çăвăнса илни лайăх. Çакă организма кунĕпе хĕртĕннĕ хыççăн кирлĕ таран сивĕнме, хăвăра вара канма пулăшать. Йĕтĕн пиртен е пир-авăртан çĕленĕ тумтир тăхăнма тăрăшмалла. Вырăн таврашĕсем те çак материалсенчен хатĕрленисем пулсан аван.

Пуç ыратни, хăлхасенче шав тăни, куç умĕнче тĕтре курăнни, ăш пăтраннипе хăсас килни, чĕре хăвăрт тапни вара хĕвелпе ытларах хĕртĕннине калакан паллăсем. Кунашкал чухне малтанах сулхăн вырăн тупса лармалла, пуç çине сивĕ шывпа йĕпетнĕ татăк хумалла. Кăшт сивĕрех (ытла сиввине мар!) шыв ĕçмелле.

### ГИБДД пĕлтерет

# «Подросток» операци

Каникул кунĕсем пуçланнăранпах районти çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕ, Раççей тата республикăри Шалти ĕçсен министерствисен хушăвĕсемпе килĕшӳллĕн, «Подросток» операци ирттерет. Унăн виççĕмĕш тапхăрĕ шăпах халĕ пырать. Çак хушăра инспекци сотрудникĕсем оперативлă тата профилактика мероприятийĕсене палăртса хунă. Çул çитменнисем йĕркене ан пăсчăр тесе вĕсем кану лагерĕсене çеç мар, пур обществăлла вырăнсене те, çул-йĕр çине те тĕрĕслевсемпе тухаççĕ, çуран çӳренĕ чухне тата машинăра ларнă чух ачасен хăйсене мĕнле тытмалли пирки асăрхаттараççĕ. Çапкаланса çӳрекен тата преступлени тума пултаракансем çине ытларах тимлĕх пулĕ.

**А. ЩЕРБАКОВ, патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн пропаганда пайĕн инспекторĕ.**

### Милици хроникинчен

## Йывăç «чăрмантарнă»

Шупашкарта пурăнакан Ираида И. хăйĕн машинипе Шомик ялĕнчи çулпа пынă чух пĕр йывăçа пырса çапăннă. Унпа юнашар ларса пынă ывăлĕ, хăрушсăрлăх пиçиххийĕпе çыхăнманскер, самаях суранланнă. Амăшĕн тимсĕрлĕхне пула каникул вăхăтне 9 класс ачин больницăра ирттермелле пулать.

## Больницăра та телефон вăрлаççĕ

Муркашри тĕп больницăра сипленекен Алексей Б. хăйĕнпе пĕр палатăра выртакан Владислав Г.-не кĕсье телефонĕ вăрланă. Çапла пĕр чиртен сывалнă хушăрах тепĕр «чир» ĕçлесе илнĕ, ăна вара милици ĕçченĕсен «сыватмалла» пулать.

## «Алкоголь суррогачĕпе наркăмăшланнă»

Макаçи ялĕнчи Владимир Г. шăрăх пулнине пăхмасăрах спиртлă шĕвеке курманла ĕçсе лартнă. Çак асапа организмĕ чăтайман. Мăн Сĕнтĕр больницинче арçынна «алкоголь суррогачĕпе наркăмăшланнă» тесе диагноз лартнă.

## Ванчăк кĕленче айăпла-ши?

Кораккассинче пурăнакан Алексей Б.-па Сергей С. йывăççем айĕнчи сулхăнра эрех ĕçсе ларнă. Анчах кĕске хушăрах юлташсем хирĕçсе каяççĕ: Алексей юнашар ларакана пуçĕнчен пушă кĕленчепе çапать. Кĕленче ванать. Ванчăка тытса вара мăйĕнчен те çапма вăй çитерет çакскер. Алексей хăйĕнчен чылай аслăраххисене епле «хисепленине» халĕ следстви татса парĕ.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

www.yandex.ru

### Прогноз погоды с 18 по 24 июля

| Сб. 18 | Вс. 19 | Пн. 20 | Вт. 21 | Ср. 22 | Чт. 23 | Пт. 24 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Переменная облачность, небольшой дождь | Переменная облачность | Переменная облачность | Дождь, гроза | Переменная облачность, дождь | Переменная облачность, дождь | Переменная облачность, небольшой дождь |
| + 25<br>+18 | +25<br>+17 | +27<br>+21 | +23<br>+16 | +21<br>+15 | +16<br>+13 | +19<br>+14 |

# Тав тăватпăр

Юратнă мăшăра, Патаккасси ялĕнче пурăннă Валерий Нилович Шидикова юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, çак пысăк хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн районти ветеринари станцийĕн ертӳçине, коллективне, Оринин ял тăрăхне, «Оринино» хуçалăх коллективне, пирĕн хурăнташсене, тусюлташсене, ял-йыша, кӳршĕсене чĕререн тав тăватпăр.

**Мăшăрĕ, ачисем.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления




5-5.

**Продаем фрезу почвенную для мотоблока «Агро» 2008 года выпуска, недолго бывшую в употреблении. Тел.: 8-927-991-04-55.**

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97.** 3-9.

**Гравмасса, щебень, песок, керамзит, навоз. Доставка до 30 тонн за 1 рейс, недорого. Тел.: 8-927-665-61-29.** 2-5.

**Продаем: доски (обрезные, необрезные), брус любого сечения, штакетник, заборные доски, столбы, дрова-срезки. Цены ниже рыночных. Доставка. Тел.: 8-905-345-31-09.** 4-5.

**Ремонт и изготовление ювелирных изделий в здании Дома быта. Тел.: 8-927-668-85-01.** 4-5.

**Гравмасса, щебень, песок, керамзит, навоз. Доставка до 30 тонн за 1 рейс, недорого. Тел.: 8-927-665-61-29.** 3-5.

**Блоки керамзитобетонные 20х20х40, бетон, раствор, песок, гравмасса, щебень, асфальт, ЖБИ. Тел.: 8(8352)52-95-95, 8-927-668-84-40.** 7-40.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84.** 3-5.

**Продаю ВАЗ-21074, цвет фиолетовый, 2003 г. выпуска, в отличном состоянии. Цена договорная. Тел.: 8-927-848-64-16.**

**Срочно куплю квартиру в с. Моргауши не менее 48 кв. метров. Тел.: 8-927-844-64-05, 62-4-86.**

**Продаю кирпичный гараж рядом с магазином «Парковая». Тел.: 8-905-199-51-93.**

**Продаю керамзитобетонные блоки 20х20х40 см., керамзит, гравмассу, песок с доставкой. Тел.: 8-902-327-66-55, 67-66-95.** 1-5.


Участник долевой собственности **Яковлев Виталий Аристархович, 07.07.1966 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, деревня Шатьмапоси, ул. Первомайская, дом 53** сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:281001 площадью 1,23 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Яковлеву Виталию Аристарховичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Шатьмапоси, ул. Первомайская, дом 53.

Участник долевой собственности **Яковлев Виталий Аристархович, 07.07.1966 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, деревня Шатьмапоси, ул. Первомайская, дом 53** сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:281001 площадью 1,23 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Яковлеву Виталию Аристарховичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Шатьмапоси, ул. Первомайская, дом 53.

Участник долевой собственности **Яковлев Виталий Аристархович, 07.07.1966 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, деревня Шатьмапоси, ул. Первомайская, дом 53** сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, участок расположен в западной части кадастрового квартала 21:17:281001 площадью 1,23 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Яковлеву Виталию Аристарховичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Шатьмапоси, ул. Первомайская, дом 53.

Участник долевой собственности **Исаев Геннадий Петрович, 25.02.1946 года рождения, проживающий по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, дом 41, кв. 80,** сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ильинское, на территории землепользования **СХПК «Хлебороб»**, участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:021001 площадью 1,24 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Ильинского сельского поселения.
2. Исаеву Геннадию Петровичу, проживающему по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Мичмана Павлова, дом 21, кв. 80.

Участница долевой собственности **Еремеева Олимпиада Юрьевна, 18.04.1978 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул.Петрова, д. 9, кв. 163,**сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Шатьмапосинское, участок расположен в северо-западной части кадастрового квартала 21:17:281001 площадью 1,23 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Шатьмапосинского сельского поселения.
2. Еремеевой Олимпиаде Юрьевне, проживающей по адресу Чувашская Республика, г. Чебоксары, ул. Петрова, д. 9, кв. 163.

Участница долевой собственности **Романова Таисия Николаевна, 11.06.1930 года рождения, проживающая по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Хундыкасы, ул. Лесная, д. 82**, сообщает о намерении выдела земельного участка в счет доли в праве общей собственности на земельный участок из земель сельскохозяйственного назначения, местоположение которого: Республика Чувашская, район Моргаушский, сельское поселение Ильинское, на территории землепользования **СХПК «Хлебороб»**, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:021001 площадью 2,48 га пашни для производства сельскохозяйственной продукции.

Все претензии по месту расположения земельного участка прошу направить в 2 адреса:

1. Администрации Ильинского сельского поселения.
2. Романовой Таисии Николаевне, проживающей по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Хундыкасы, ул. Лесная, д. 82.

Коллектив МИ ФНС России № 6 по ЧР глубоко скорбит главному государственному налоговому инспектору отдела камеральных проверок МИ ФНС России № 6 по ЧР Павловой В.В. по поводу смерти

**МАТЕРИ**

и выражает искреннее соболезнование ее родным и близким.

**Моргаушская районная газета «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ» Минкультуры Чувашии.

**Главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9А.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 62-1-36, заместитель главного редактора - 62-2-82, бухгалтерия - 62-1-35, отделы: общественно-политической жизни - 62-2-82, экономики - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации ПИ № ТУ 21-00025 от 26 декабря 2008 года.

Объем 1,5 усл. печатных листа.
Рукописи не рецензируются и не возвращаются, объемом более 2 стр. не принимаются.
Редакция не несет ответственности за содержание рекламных объявлений.

ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.
Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Дежурный по номеру Николаева Н.Н.
Номер подписан 17.07.2009 г.
Время подписания в печать: по графику – 17 час. 20 мин, фактическое – 17 час. 20 мин.
Заказ Тираж 3706.

Номер набран и сверстан в РГУ «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.